27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
27
ЮНКУН
191(6686) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Чугун çул валли вутă хатĕрлесси— куллен тумалли ĕç

Вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра пурнăçа кĕртни пĕтĕм халăх хуçалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Фронтпа çĕршыв ыйтăвĕсене тивĕçтерме промышленноçа йывăç материалĕсем, транспорта топливо кирлĕ. Вăрман хатĕрлекен организацисен хисеплĕ задачи — çав материалсемпе топливăна çителĕклĕ таран парса тăрасси пулать.

Анчах, калас пулать, республикăри вăрман хатĕрлекен организацисем çав ответлă задачăна тивĕçлипе пурнăçа кĕртмеççĕха. Уйрăмăнах чугун çул валли вутă хатĕрлесси юлса пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 30 процент, турттарас енĕпе 20 процент çеç тултарнă. Çак ĕç Улатăр, Буинск, Вăрнар, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсенче начар пырать.

Чугун çул валли вутă хатĕрлесси çавăн пек сÿрĕк пыни, чи малтанах, вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕксĕр мобилизациленинчен килет. Республикăри чылай районсем ĕç вăйĕ мобилизацилемелли плана пурнăçа кĕртмен. Çапла, Улатăр районĕнчен çуранписем 65 çын, лашапа 12 çын ĕçлемелле пулсан, хальхи вăхăтра çуранписем 7 çын, лашапа 3 çын çеç ĕçлеççĕ. Ĕç вăйĕ мобилизацилес енĕпе Кувакино, Комсомольски, Вăрнар, Калинино, Çĕмĕрле районĕсем те сÿрĕк ĕçлеççĕ. Вăл районсенчи партипе совет организацийĕсем ĕç вăйне мобилизацилесси хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса тăраççĕ. Ĕç вăйĕ мобилизацилеме панă плана мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеççĕ, вăрмана каякансем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелеме пулăшмаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен организацисен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Вăрманпромхозсемпе вăрман пункчĕсен руководителĕсем рабочисем валли тухăçлăн ĕçлеме услови туса парассишĕн тивĕçлипе тăрăшмаççĕ, механизмсемпе туллин усă курмаççĕ. Улатăр вăрманпромхозĕ чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 36 процент, турттарас енĕпе 13 процент çеç тултарнă. Апла пулин те, вăрманпромхоз руководителĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, плана тултарассине хăвăртлатмалли майсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Лучковăй пăчкăсемпе кунта кирлĕ пек усă курмаççĕ, моторпа ĕçлекен пăчкăсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ. Автомашинăсемпе усă курас ĕçре те çитменлĕхсем нумай-ха. Вăрманпромхозра ялан ĕçлекен кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухман. Унта пурĕ 280 çынна яхăн пулсан, вĕсенчен 15-шĕ кăна вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Ыттисем вара пурте çăмăл ĕçсенче.

Вăрманта ĕçлекенсем валли апат-çимĕç продукчĕсем тăратакан организацисем начар ĕçлени те сахал мар чăрмавсем кÿрет. Чăвашлеспродторг ку тарана çитсе те вăрманти рабочисем патне продуктсем вăхăтра çитерессине организацилемен. Таварсем пур, анчах вĕсене вырăнсене вăхăтра çитермеççĕ тата чылай чухне законсăр салатса пĕтереççĕ. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех Леспродторг работникĕсем хушшинче ответсăрлăх саралнинчен килет.

Чугун çул транспорчĕ — паттăр Хĕрлĕ Çарăн тăванĕ, унăн çапăçури çывăх помощникĕ. Чугун çулсем вăрçă вăхăтĕнчи пек тĕрĕс те тикĕс ĕçлетчĕр тесен, вĕсем валли топливо çителĕклĕ хатĕрлесе парас пулать. Çак хисеплĕ задачăна пурнăçа кĕртме пирĕн условисем çителĕклĕ, большевикла тимлĕхпе ĕçлени, ĕçе тĕрĕс организацилени çеç кирлĕ.

Районсенчи партипе совет организацийĕсен, вăхăта вăраха ямасăр, вăрманта ĕçлеме лавсемпе çынсене планпа палăртнă чухлĕ уйăрса памалла. Çакна ăнланса илес пулать: чугун çул валли вутă хатĕрлесси—оборонăллă ĕç. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса тăнинчен килет. Ĕç вăйĕ тăратманнине пула плана тултарассине вăрăма хăварни çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать.

Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен тата партипе профсоюз, комсомол организацийĕсен вăрмана пыракан ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтармалла, транспорт средствисемпе, механизациленĕ çулсемпе туллин усă курмалла. Рабочисем пĕрмаях улшăнса тăрассине пĕтермелле. Рабочисем тухăçлăн ĕçлетчĕр тесен, вĕсем валли лайăх условисем туса памалла. Общежитисенче тасалăхпа йĕркелĕх пултăр, рабочисем хăйсем илме тивĕçлĕ продуктсене вăхăтра илсе тăччăр. Ĕç хатĕрĕсене механизацилес, вăрманта ĕçлекенсене механизациленĕ инструментсемпе ĕçлеме хăнăхтарас тĕлĕшпе куллен тимлĕн тăрăшмалла. Малта пыракан рабочисен опытне сарса, вĕсен опычĕпе мĕнпур рабочисене тухăçлăн ĕçлеме вĕрентмелле.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелес пулать. Фронтран килекен чаплă хыпарсене çийĕнчех пĕлтерсе тăмалла, тĕнчери лару-тăрупа паллаштармалла, партипе правительство вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсене паракан çăмăллăхсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва кашни рабочие явăçтарас пулать. Рабочисем хăйсем илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Çаксем вĕсем рабочисене ĕç тухăçлăхне ÿстерме, заданисене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа тултарма хăнăхтараççĕ.

Çĕршывпа фронт интересĕсем вăрман хатĕрлекен организацисене промышленность валли йывăç материалĕсем, чугун çул валли вутă кирлĕ таран хатĕрлеме хушаççĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисенчи ертсе пыракан работниксен, партипе комсомол организацийĕсен хисеплĕ задачи —пур рабочисене те ăмăртăва явăçтарса, задание кашни пункт, участок тата бригада, кашни рабочи тултармалла тăвасси пулать. Промышленноçпа транспорта йывăç материалĕсем çителĕклĕ тăратни Хĕрлĕ Çар валли çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптама пулăшать.

## Вăрнарпа Шупашкар районĕсенчи колхозсем государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе пурнăçларĕç

### Республикăри пур районсен те малта пыракансемпе танлашассишĕн, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса татассишĕн кĕрешмелле!

**РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА СРОКЧЕН ТЫРА ПАРСА ТАТАССИШĔН ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ**

(1944 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх)

| Районсем | Тырă панă (процентпа) |
|---|---|
| Вăрнар | 100,0 |
| Шупашкар | 92,4 |
| Ишлей | 86,3 |
| Сĕнтĕр | 85,8 |
| Муркаш | 84,7 |
| Куславкка | 82,7 |
| Çĕрпÿ | 82,5 |
| Калинино | 80,6 |
| Советски | 79,8 |
| Октябрьски | 78,5 |
| Чурачăк | 77,4 |
| Шăхасан | 76,0 |
| Сĕнтĕрвăрри | 74,3 |
| Элĕк | 73,0 |
| Вăрмар | 72,5 |
| Красноармейски | 70,9 |
| Канаш | 70,5 |
| Етĕрне | 70,2 |
| Йĕпреç | 65,7 |
| Тăвай | 63,6 |
| Первомайски | 60,1 |
| Улатăр | 59,4 |
| Елчĕк | 58,3 |
| Комсомольски | 57,2 |
| Çĕмĕрле | 54,9 |
| Хĕрлĕ Чутай | 54,5 |
| Пăрачкав | 50,6 |
| Чкаловски | 41,6 |
| Шăмăршă | 40,5 |
| Кувакино | 38,5 |

### Кайра пынă колхоз малти рете тухрĕ

Сĕнтĕр районĕнчи Çармăскассинчи «Заря» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлнă колхозсен ретĕнче пулнă. Кăçал вăл, тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртсе тата государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçласа, малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ.

Çак çитĕнĕве колхозри ĕçе тĕрĕс организациленипе тунă. Колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ А. С. Ягодкин юлташ, хăй ĕçлеме тытăнсанах, пĕтĕм колхозри вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухрĕ. Тырă вырнă çĕрте яланах уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ. Çавна пула кашни колхозник ĕç нормине тултарса пынă. Нумай колхозниксем, сăмахран, В. Г. Вазикова, П. Васильева, П. Матвеева, Е. Самушкова тата ытти юлташсем те икшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Çуртыррисене вырнă çĕрте машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курнă. Кĕреплеллĕ çавасемпе çулакансем П. Селюшкина, С. Самушкова юлташсем куллен çуршар гектар çулнă. Авăн çапнă çĕрте те нормăна иртерсе тултаракан колхозниксен йышĕ кунран кунах ÿссе пырать.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе лайăх организацилениние пула, колхоз государство умĕнчи обязательствăсене кĕске срокра парса татма пултарчĕ. Государствăна тырă памалли плана фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхрах тултарнă. Колхоз ĕнтĕ государствăна çитес çулшăн 50 центнер тырă панă.

Халĕ колхозра авăн çапаççĕ, çĕрулми кăлараççĕ. Колхозниксем, хăйсем стахановла тухăçлă тырпул туса илнипе савăнса, фронта хĕрÿ ĕçпе пулăшаççĕ.

Т. ИВАНОВ.

### Кашни кун—хĕрлĕ обоз

ОКТЯБРЬСКОЕ. Комсомолăн Тельман ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Е. Васильева юлташ) хăйĕн пĕтĕм ĕçне тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес задачăна пăхăнтарса туса пырать. Анса пулнă тырра тĕплĕн пухса кĕртнипе пĕрлех, ялти комсомолецсем государствăна тырă парас ĕçе лайăх йĕркелерĕç. Ку тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа транспорт бригади тунă, ăна Отечественнăй вăрçă участникĕ, комсомолец Н. Фадеев ертсе пырать. Колхоз государствăна тырă кашни кунах 12 лавлă хĕрлĕ обозпа турттарса тăчĕ.

Çапла вара, вăл сентябрĕн 11-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсем памалли плана 100 процентпех пурнăçларĕ. Государствăна тырă турттарнă çĕрте вăкăрсемпе усă курнă. Отечественнăй вăрçă участникĕсем — М. Семенов, И. Павлов, Л. Архипов юлташсем вăкăрсемпе хатĕрлев пунктне пурĕ 160 центнер тырă леçсе панă.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

### Пур тĕрлĕ тырăсене те вырса пуçтарнă

ТĂВАЙ. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлă туса пыраççĕ. Кунта кашни кун государствăна 80—90 центнер тырă леçеççĕ.

Колхозра ĕçе лайăх йĕркелесе, 423 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 10 кун хушшинче вырса капана хывнă. 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем пур тĕрлĕ çуртыррисене те вырса, кĕлтисене капана хывнă, хăйсене панă плана тултарнă.

Ф. Шумаева, К. Васильева, А. Никифорова колхозницăсем кашни кун хăйсен ĕç нормине 180—200 процент таран тултараççĕ. И. Белковпа В. Степанов юлташсем машинăпа кашни кун 4 гектар вырăнне 5,5—6 гектар вырса пынă.

Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра халĕ уяр çанталăкпа туллин усă кураççĕ. Кăнтăрла та, çĕрле те хĕрсех авăн çапаççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

А. ЗАЙЦЕВ.

### *Тăкаксемпе кĕрешмеççĕ*

ШĂХАСАН. Киров ячĕпе тăракан колхозра кăçал 6-мĕш çĕр участокĕнче, 84 гектар çинче, кашни тăваткăл метрта 4—5 ыраш пучахĕ тăкăнса юлнă. Анчах бригадăсенче пучах пуçтарас ĕçе пачах организацилемен.

2-мĕшпе 6-мĕш бригадăсен комбайн вырнă участокĕсенче те сахал мар тăкаксем пулнă. Семеновăпа Николаева бригадирсем тăкăнса юлнă тырпула пухас ĕç çине çавăрăнса та пăхман. Николаева бригадин участокĕнче (10 гектар) кашни гектар çинчех 125 килограмм таран сĕлĕ тăкăнса юлнă. Çавăн пекех итем çине кĕртнĕ кĕлтесене те типтерлĕ пăхмаççĕ. Пĕтĕм итем таврашĕнче пĕчĕк-пĕчĕк купасемпе тырă саланса выртать, çумăр айне пулнă хăшпĕр купасем шăтса тухнă.

Çакăн пек пысăк тăкаксем пулни колхоз руководителĕсене кăшт та шухăшлаттармасть пулас. Тырпулсене типтерлĕн пухса кĕртес ĕç çине колхоз руководителĕсен тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла, тăкаксемпе вăйлăнрах кĕрешмелле.

А. АНТОНОВ.

### Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатмалла

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çаплах япăх пырать. Паянхи кун тĕлне пурĕ те 1802 гектар кăна сухаланă, пĕтĕм планпа танлаштарсан çакă вăл 24 процента яхăн кăна пулать.

Ĕç çакăн пек сÿрĕк пыни кĕрхи çĕртме ĕçне каярахпа тăвас кăмăлпа ĕçленинчен килет. «Новая сила», «Правда», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем те кĕрхи çĕртме тума тытăнман. Уйрăм колхозсем ку ĕçе ячĕшĕн кăна тăваççĕ. «Красный Октябрь» колхоз 125 гектар вырăнне 15 гектар сухаланă. Кĕрхи çĕртме тумалли графика тултарса пыман колхозсем вуншарăн шутланаççĕ. Анчах та çак тĕслĕхсем район руководителĕсене хускатмаççĕ, вĕсем çаплипех çĕртме ĕçĕ çине иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç çине пăхнă пек пăхаççĕ.

Т. Я.

### *Çĕрулми хурса усрамалли турĕç*

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чурашри «Новый быт» колхозăн хирĕнче кăçал çĕрулми тухăçлă пулчĕ. Çĕрулми пухса кĕртиччен колхозра çĕрулми хума çĕнĕ хранилище туса пĕтерчĕç. Унта 500 тонна ытла çĕрулми вырнаçать.

(«Хĕрлĕ Октябрь»).

ЧУРАЧĂК РАЙОНĔНЧИ «ПОБЕДА» КОЛХОЗРА.
Ÿкерчĕк çинче (сулахайран сылтăм алла): А. Савельева юлташ кĕлте кÿрет, кладовщица А. Егорова çапнă тырра виçсе йышăнать.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

### Коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пынипе тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртрĕмĕр

СЕНТЕРВАРРИ. Пĕчĕк Маклашкинăри «Красная Армия» колхозри парторганизацинче 5 коммунист, комсомолăн пуçламĕш организацийĕнче 7 комсомолец тăраççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте чăн-чăн организаторсем пулса ĕçлерĕç, колхозниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пычĕç. Вĕсенчен 4 çын — агитатор, 8 çын—хаçат-журналсем вуласа паракансем.

Вĕсем, ялти мĕнпур халăха уйхир ĕçне явăçтарас тесе, чи малтанах СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тата Вăрнар районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине тĕплĕн ăнлантарса панă. Кунсăр пуçне, кашни кунах кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче Совет Информаци Бюровĕн сводкисемпе, тĕнчери хыпарсемпе паллаштарса пынă, боевой листоксемпе стена хаçачĕсем кăларнă. Колхозра ĕç нормине кам мĕн чухлĕ тултарса пынине кăтартма кăтарту хăми тата Хисеп хăми тунă. Вĕсем çине малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен ячĕсене кунсеренех çырса пынă.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмăнах 2-мĕш бригадăн бригадирĕ А. Ильин, 1-мĕш бригадăри А. Алексеева колхозница тата колхоз председателĕ Е. Анкудинов юлташсем аван ĕçлерĕç.

Колхозри агитаторсем, агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пынипе пĕрлех, тырă вырнă çĕрте те пример кăтартрĕç. Сăмахран, коммунистка Е. Андреева, комсомолка А. Степанова юлташсем ĕç нормине кунсеренех 130—150 процент таран тултарса пычĕç. Комсомолец А. Белов юлташ вăкăрсемпе кĕлте турттарнă çĕрте нормăна икшер хут иртерсе тултарса пычĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсене бригадăсемпе звеносем çумне çирĕплетни ăнса пулнă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртме пулăшрĕ. Çапла ĕçлесе, колхоз сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырă вырса пĕтерчĕ, кĕртыррисене акса тата авăн çапса пĕтерчĕ, государствăна кăçалхи çулшăн тырă парса татса, çитес çулшăн аванс шучĕпе 90 тонна леçрĕ.

Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра çитменлĕхсем те чылай пулкаларĕç. Сăмахран, комсомолка-учительница Е. Андреева тата А. Осипов юлташсем боевой листок кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç. Хăшпĕр бригадирсем, колхозниксене пурне те ĕçе кăларма тăрăшман пирки, ĕçе вăраха хăварса пычĕç.

Çак ĕçри çитменлĕхсем çинчен партипе комсомол пухăвĕсенче вăхăтра сÿтсе-явса, эпир вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнтăмăр.

З. БАЗАРОВА,
Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

### Вăрлăх фончĕ хыврĕç

ВĂРНАР. Хирпуçĕнчи «Победа» колхозра государствăна тырă памалли обязательствăна пурнăçланă хыççăн вăрлăх фондне хывма тытăнчĕç. Халĕ 100 центнер тулă, 100 центнер урпа тата 100 центнер сĕлĕ вăрлăхĕсем хыврĕç.

(«Социализм çулĕпе»).

## Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

### Вату рабочисем çамрăксене вĕрентеççĕ

КУСЛАВККА, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисенче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту саралсах пырать. Çăкăр пĕçерекен заводпа райпромкомбинат коллективĕсем тата чугун çул çинче ĕçлекенсем уява производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме сăмах пачĕç. Вĕсем халĕ хăйсен обязательствине чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Асăннă предприятисенчи вату рабочисем, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çамрăксене техникăна вĕрентме пулнă. Райпромкомбинатри производство заведующийĕ Димитриев юлташ 2 çынна урапасем тума, Портнов юлташ 2 çынна çĕвĕ ĕçне тата 3 çынна мастер пулма вĕрентме сăмах панă. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртме тытăннă ĕнтĕ.

### *Рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ*

ÇĔРПŸ. Юлашки вăхăтра райпромкомбинат коллективĕ хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Вăл, август уйăхĕнчи плана 110 процент тултарса, республикăри промкомбинатсем хушшинчи ăмăртура мала тухрĕ, 5.000 тенкĕ преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Промкомбинат коллективĕ, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ уяв умĕнхи ăмăртăва организациллеме чĕнсе каланине йышăнса, сентябрьпе октябрьти плана срокчен тултарма пулчĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн кашни рабочи пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет.

А. В.

### Уйăхри задание 20 кунта тултарассишĕн

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ заводăн коллективĕ чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн Етĕрнери спирт заводĕнчи рабочисемпе работницăсем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Завода кирлĕ чĕртавар районри колхозсенчен татти-сыпписĕр пырса тăнипе усă курса, завод коллективĕ ывăнма пĕлмесĕр, çĕрле те, кăнтăрла та ĕçлет. Сентябрь уйăхĕнчи задание паян-ыранах пурнăçлаççĕ. Рабочисем октябрь уйăхĕнчи плана 20 кунта тултарма пулчĕç, продукцин хăйне ларакан хакне 10 процент йÿнетме йышăнчĕç.

Завод пĕр чарăнмасăр ĕçлетĕр тесе, халĕ хĕрсех хĕле хатĕрленме тытăннă. Вутă хатĕрлесси, хĕлле кирлĕ пулакан тĕрлĕ оборудованисене юсасси ăнăçлăн пырать.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, заводри рабочисем — пĕр-пĕринпе, çавăн пекех цехпа цех ăмăртса ĕçлеççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту мĕнле пынине кашни кун тухса тăракан «Стахановец» стена хаçатĕнче çутатса пыраççĕ. Çапла ĕçлесе, завод графика ăнăçлăн тултарса пырать.

Заводра паттăр Хĕрлĕ Çар валли çар техникине тума укçа-тенкĕ пухасси те саралсах пырать. Паянхи кун тĕлне укçан 75.000 тенкĕ пухнă, заем облигацийĕсем 8.000 тенкĕлĕх, черетлĕ отпускшăн илмелли укçана 12.000 тенкĕ пухнă. Укçа пухасси малалла ăнăçлăн пырать.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

### Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре малта пыракансем валли таварсем

Кĕрхи çĕртме тумалли задание ăнăçлăн пурнăçлакан чи лайăх трактористсене, трактор бригадисен бригадирĕсене, участок механикĕсене тата МТС-сен агрономĕсене сутма 50 миллион тенкĕлĕх промышленность таварĕсем уйăрса хунă. Çав таварсем хушшинче—çитсă-пусмасем, сыхса тунă япаласем, ată-пушмаксем, табак, папироссем, хуçалăхра кирлĕ супăньпе пит çумалли супăнь.

Çав таварсене ялпосемпе райпотребсоюзсен магазинĕсенче сентябрь, октябрь, ноябрь уйăхĕсенче сутмалла. (ТАСС).

### Александр Покрышкин хăйĕн тăван хулинче

Совет Союзĕн виçĕ хут Геройĕ Александр Покрышкин хăйĕн тăван хулине пынă. Чапа тухнă героя Новосибирскри ĕçнă. Чапа тухнă героя Новосибирскри ĕçсыннисем ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çĕпĕрти летчиксем хăйсен паллă землякне сывлăшра кĕтсе илнĕ.

Аэродромра пысăк митинг пулса иртнĕ. Новосибирск çыннисем Покрышкин юлташа хăйсен чаплă ĕçĕсем çинчен, фронтшăн, тăшмана часрах çĕнтерессишĕн вăйшеллемесĕр ĕçлени çинчен каласа панă. (ТАСС).

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Сентябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем Эстонин хĕвеланăç пайĕпе кăнтăр пайĕнче, наступление вăйлатса пырса, Эстони ССР-ĕн узед центрне ХАПСАЛУ хулипе портне, КИЛИНГИ-НЫММЕ хулине, МЫЙЗАКЮЛА хулине, МУСТАЛА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 800 пункта йышăннă, вăл шутра—КЭЙЛА, ВАСАЛЕММА, РИЙЗИПЭРА, ПАЭКЮЛА, ВЭЛИСЕ, ВИГАЛА, УДУВЭРЕ, НЭДРЕМА, СИНДИ, КОДАРА, РАННАКЮЛА, ВЫЙСТЕ, ХЯДЕМЭСТЕ, КУСИКУ, КУЛЛА, РИММУ, ТУХАЛАНЕ ятлă пысăк ялсем тата САУЭ, КЭЙЛА, КЛОГА, ВАСАЛЕММА, ЛАЙТСЕ, ИНГУ, ХАГУДИ, РАПЛА, РАЙККЮЛА, КОЙКСЕ, ВАСКРЯМА, СУРЬЮ, СИГАСТЕ, ВОЛТВЕТИ, МЫЙЗАКЮЛА ятлă чугун çул станцийĕсем.**

**РУЙЕНА тата ВАЛМИЕРА хулисенчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, МАЗСАЛАЦЕ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВИРТЕНЫ, УНГУРМУЙЖА, ВЕЦАТЭ, МАТИШИ, ПОДЗЕНИ, ВЕЛТИ ятлă пысăк ялсем тата ВИРТЕНЫ, ИДУС, КУОКМУЙКА, ЗИЛАЙСКАЛНС, БАЛЕ, ЛОДЭ ятлă чугун çул станцийĕсем.**

**РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ВЕССЕЛАУСКА, КЛЯУСТЭС, БАНУЖИ, ЯУНКЕЙПЕНЕ, БУШАНИ, БАЛОЖИ ятлă пысăк ялсем тата ДЗЕРБЕНЕ, МЕЛЛИ, КЕЙПЕНЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.**

**САНОК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине тата унăн сăртлă-вăрманлă вырăнти инженери чăрмавĕсене çĕнтерсе пынă, вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЯБЛОНКИ, ДОЛЖИЦА, КРЫВЕ, СМЕРЕК, ВЕТЛИНА, БЕРЕГЫГУРНЕ, СМОЛЬНИ, ЛОМНП ятлă пысăк ялсем.**

**Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.**

**Сентябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 25 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ÿкернĕ.**

☆ ☆ ☆

Эстонин хĕвеланăç пайĕпе кăнтăр пайĕнче пирĕн çарсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем çапăçса 50 километр малалла кайнă та Хапсалу хулипе портне штурмласа туртса илнĕ. Çавăн пекех тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсем пулса тăракан Килинги-Нымме хулине, Мыйзакюла хулине тата Мустла хулине туртса илнĕ. 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Пирĕн çăмăллăн çÿрекен соединенисемпе пехота, аякран кайса çавăра-çавăра илсе, нимĕçсен хирĕç тăмалли узелĕсене аркатаççĕ. Синиченко старши лейтенант ертсе пыракан хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсен батарейи тăшмана флангран пырса çапнă та 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Никитин старши лейтенант командир пулса ертсе пыракан рота тăшмана хăваласа пынă чухне нимĕçсен штабне аркатса тăкнă, тăшманăн 50 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн çарсем тăшманăн хĕçпăшалне тата вăрçă хатĕрĕсене нумай тытса илеççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, совет чаçĕсем Таллин хулинче нимĕçсенчен 25 самолет, 185 тупă, 200 автомашина ытла, çар хатĕрĕсем тиесе лартнă чугун çул эшелонĕсем нумай, 15 судно тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Руйена хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, 15 километр малалла кайнă. Пирĕн пĕр соединени боецĕсем Мазсалаце хулине пырса кĕмелли çулсем çине тухнă. Тепĕр чаçсем Буртниеку-Эзерс кÿллинчен иртсе кайнă та çав районах кăнтăр-хĕвелтухăç енчен татса кĕрсе кайнă. Икĕ енчен те çав тери хăвăрт пырса çапса, совет çарĕсем Мазсалаце хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ.

Валмиера хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн пехотинецсемпе танкистсем Зилайскалнс чугун çул станцине туртса илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтаксемпе офицерсем çапла калаççĕ: юлашки кунсенче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕç дивизийĕсем пурте хăйсен вăйĕсене çурринчен кая мар пĕтернĕ. Нимĕçсем хăйсен халран кайнă соединенийĕсене пулăшма çапăçăва виçĕ çĕнĕ дивизи кĕртсе янă. Пирĕн çарсем тăшманăн çав çĕнĕ чаçĕсен йышлă контратакисене пурне те сирсе янă. Çапăçса малалла куçса пырса, совет чаçĕсем халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене наступлени тума хастарлăн пулăшса пырать. Кун каçа совет летчикĕсем нимĕçсен 140 автомашинине тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 лавне ытла пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 20 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман, оборонăра тăма лайăх вырăнпа усă курса, хытă хирĕç тăрать. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем çулсем çинче минăсем лартса хăвараççĕ, кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ. Паян Плаужу-Эзрес кÿлли районĕнче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Унта пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем нимĕçсен «хĕллехи лини» ятлă оборона позицийĕсем патне таччăнах пырса тухнă. Совет пехоти, артиллерипе танксем пулăшнипе, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та тăшманăн çак çĕнĕ линине те татса кĕнĕ. Кун каçиччен 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Балтика тăрăхне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан çапăçусенче совет боецĕсемпе офицерĕсем хăюллăн та паттăррăн çапăçаççĕ, хăйсен пысăк çар мастерлăхне палăртаççĕ. Вейс капитан командир пулса ертсе пыракан латыш боецĕсен роти пĕр çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратака тунă, анчах та вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе сирсе янă. Гварди рядовойĕ Сергейчук нимĕçсен траншейине вăркăнса кĕрсе кайнă та, гранатăсем ывăтса, икĕ нимĕçе вĕлернĕ, унтан виçĕ гитлеровеца штыкпа чиксе вĕлернĕ. Лазарев рядовой нимĕçсен «тигр» йышши танкĕ патне шуса çитнĕ те ун çине танксене пемелли граната вăркăнтарнă. Граната танк гусеницине татса пăрахнă. Лазарев юлташ тарма тăнă нимĕç танкисчĕсене пурне те автоматпа персе вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Санок хулинчен кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн çарсем, нимĕçсене вăйлăн пырса çапса, Яблоньки ятлă пысăк яла туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсенчен 20 тупă, 30 пулемет, боеприпас склачĕ тытса илнĕ. 200 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Санок хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Отрыт ту хырçи патне пырса тухмалли çулсем çинче, пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн ту отрячĕсене аркатса тăкнă. Унтан ту хырçи урлă каçса кайса, пирĕн боецсем Сан шывĕ урлă каçнă, чылай ялсене туртса илнĕ. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Рига заливĕнче нимĕçсен 5.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

# Совет Союзĕ тăрăх

## ЗОЯ КОСМОДЕМЬЯНСКАЯ ÇИНЧЕН ÿКЕРНĔ ФИЛЬМ

Мускаври киностудире «Зоя» ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçларĕç. Çак фильма çамрăк совет патриоткин—Совет Союзĕн Геройĕн Зоя Космодемьянскаян [illegible] пурнăçне тата [illegible] идеологине çитĕнтерме пулăшнă политикăллă чи пысăк событисене кăтартнă. В. И. Ленина пытарнине кăтартнă фильмăн уйрăм пайĕсене те ÿкерсе кăтарнă. Çав кунсенче Зоя çуралнă. Фильма тата Испанири ĕçсене, Чкалова Громов Сурсĕр полюсĕ урлă вĕçсе касни, стратосферăна вĕçсе хăпарни тата ытти çĕнтерÿсене кăтартнă. [illegible]

## ИНЖЕНЕРĂН ПАТРИОТЛА ĔÇĔ

1941 çулта, нимĕçсем Псков хули патне çывхарса пынă вăхăтра, çав хулари электростанцин начальникĕ В. Ж. Семенов инженер электростанцин пите кирлĕ чертежĕсемпе [illegible] приборĕсене çăлса хăварма шут тытнă. Вăл çав япаласене шанчăклă вырăна пытарса хунă. Псков хулине хуçаласа пурăнна тăшман вара электростанцие хута ярайман. Вăл пĕр вăйлă мар агрегата çеç хута яма пултарнă.

Семенов инженер халĕ Хĕрлĕ Çарта. Оккупантсене Псков хулинчен хăваласа кăларнă хыççăн вăл Главэнергăна çав чертежсемпе приборсем ăçта выртни çинчен çырса пĕлтернĕ. [illegible] Псковри электростанцие вăрçăччен пекех вăйлă туса хума май пур. [illegible] Псков хулине специалистсен бригади тухса кайнă. (ТАСС).

## ОДЕССĂРА ЧИ ПЫСĂК БИБЛИОТЕКА УÇĂЛНĂ

Одессăра пирĕн çĕршыври чи пысăк библиотекăсенчен пĕри уçăлнă. Ăна 1829 çулта организациленĕ. Çак библиотекăн хранилищинче 2 миллион кĕнеке ытла пулнă. Унта чи авалхи алçырăвĕсенчен, питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекесенчен [illegible]. Нимĕçсем хулана оккупациленĕ вăхăтра библиотекăна пĕтерсе тăкас хăрушлăх хăратса тăнă. Библиотека сотрудникĕсем Янушковская, Кудлач тата Корочин литературăн пĕр пайне [illegible] çăлса хăварнă. Чи хаклă кĕнекесене нумайĕшне [illegible] илсе кайнă пулнă.

Халĕ библиотекăна вăрçă вăхăтĕнче [illegible] пин çĕнĕ кĕнеке пынă. (ТАСС).

## СТУДЕНТСЕНЕ ФИЗКУЛЬТУРА ĔÇНЕ ВĔРЕНТМЕЛЛЕ ТУНИ

Аслă шкулсенче студентсене обязательнăй йĕркепе физкультура ĕçне вĕрентмелле тунă. Çак ĕç валли 30—50 сехет уйăрса панă. [illegible] Педагогика институчĕсенче [illegible] студентсем иккĕмĕш специальноçне тунассĕ,—вĕсем вăтам шкулсенче 7 çул вĕренмелли шкулсенче физкультура воспитани вĕрентекен преподавательсем пулса тăрассĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕ республикăсенчи, крайсенчи, областсенчи тата хуласенчи физкультурăпа спорт комитечĕсене аслă шкулсенче [illegible] пулăшма хушнă. (ТАСС).

## Çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе лайăх организацилесшĕн

Партипе правительство йышăннă тăрăх, пирĕн республикăри колхозниксене Саратов облаçĕнчи Приволжски, Красноярск тата Марксовски районсене куçарса каймалли планне çирĕплетнĕ. [illegible]

[illegible]

Саратов облаçĕнчи Приволжски, Красноярски, Марксовски районсенчи колхозсем [illegible]. Сăмахран, Марксовски районĕнчи [illegible] 3577 гектар шутланать. [illegible] тырăсем 76 процент ытла шутланаççĕ. Вăл шутра çурхи тулă 58,7 процент, ыраш 24,4 процент, урпа 6 процент ытларах, вир 6,9 процент шутланать. Техникăллă культурăсен хисепĕнче хĕвелçаврăнăш пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Колхозсем хăйсен уйхирĕсенче çулленех тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Çапла, При[illegible]

[illegible] са пыма тивĕçлĕ. Саратов облаçне куçса кайма кăмăл тăвакан колхозниксене пур тĕлĕшпе те пулăшмалла.

Массăллă ăнлантару ĕçне большевикла организацилесен, колхозниксене çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе вăхăтра тата лайăх пурнăçа кĕртме пулать. Çакна тумалла та пирĕн.

**Н. ЖУКОВ.**

## *Колхоз пурлăхне лайăх сыхламалла*

ИШЛЕЙ. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, колхоз çуртйĕрĕсемпе пурлăхне çаратасран тата пушарсенчен нихçанхинчен те çивĕчрех сыхлани кирлĕ. Чылай çĕрте вырăнти советсемпе колхоз председателĕсем çак ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ.

Сăмахран, Кипеккасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхозах илер. Кунта пушар дружинин начальникĕ Плотников тата колхоз председателĕ Пайманов юлташсем ялти, уйхирти, итем çинчи хуралçăсене тĕрĕслесех тăраççĕ. Колхоз çуртйĕрĕсем патĕнче те талăкĕ-талăкĕпех хурал тăмалла тунă. Ялсовет председателĕ комсомолец С. Пайманов юлташ ку тĕлĕшпе куллен тăрăшса ĕçлет. Çавăнпа кунта пушарпа кĕрешмелли инвентарь пĕтĕмпех юсавлă. Пушар дружининче 20 çын тăрать. Вĕсенчен кашни хăйне уйăрса панă ĕçе лайăх туса пырать.

Çавăн пекех Чаканар, Ишек ялсоветĕсенче те пушарпа кĕрешес, колхоз пурлăхне сыхлас ĕçе лайăх организациленĕ.

Анчах пур ялсоветĕсемпе колхозсенче те çак ĕç йĕркеллĕ пулса пырать теме çукха. Хăшпĕр ялсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсем çак ĕçĕн ответлăхне туймаççĕ. Акă, Васликасси ялсовет нех илер. Кунта пушарпа кĕрешес тата çирĕп хурал тăратас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Колхозсенче пушарпа кĕрешмелли инвентарь юсавлă мар.

Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра ялсенче, уйхирте, итем çинче çирĕп хурал тăратманнине пула пысăк инкек пулма пултарать. Çак ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе чи малтан ялсовет председателĕсем тăрăшса ĕçлеме тивĕç. Вĕсен колхозсене кунсеренех тĕрĕслесе тăрса, ĕçре пулăшса пымалла.

**Г. СЮТРУКОВ.**

### *Критикăпа библиографи*

## „Тăван çĕршыва сыхлани"

Чăвашсен государство издательстви кăçал «Ĕлĕкхи чăваш фольклорĕ» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Ăна Хветĕр Уяр пухса хатĕрленĕ. Умсăмахне С. Эльгер çырнă.

Тăван çĕршыва сыхлани çинчен калакан ĕлĕкхи чăваш фольклорне пичетлесе кăларнипе Чăвашсен государство издательстви питех те паха ĕç тума шутланă. Анчах издательство çав ĕçе тивĕçлипе пурнăçлайман.

Вулакансене, пуринчен ытла, кĕнеке авторĕ хăйĕн ĕçĕ çине çиелтен пăхни, фактсене пăтраштарса кăтартни, литературăри событисене тĕрĕс мар ăнлантарса пыни пăшăрхантарать. Кĕнекен 19—23 страницисенче «1812-мĕш çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем» ятлă юрра пичетленĕ. Автор ĕнентерне тăрăх, «ку юрра 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче çырса илнĕ, вĕсене чăвашсен кĕнеке палатин архивĕнче шыраса тупнă» иккен. Тĕрĕс мар! Вăл юрра фольклор шутне кĕртнине ĕненме çук. Мĕншĕн тесен. вăл юрра Т. К. Кириллов çырнă, 1914 çулта уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларнă. Чăвашсен наукăпа тĕпчев институтĕнче Кирилловăн алçырăвĕ паянхи кунччченех сыхланса пурăнать. Çав юррăн алçырăвне хăй вăхăтĕнче К. В. Иванов музейĕн экспоначĕсем хушшине те тăратнăччĕ.

«Пулăшăр!» ятлă сăвва (24—29-мĕш страница) халăх юрри тесе пичетлесе кăларни те вулакансене улталани пулать. Чăваш халăх юррисем ун пек пулмаççĕ, чăваш юррисем пурте пекех такмак формиçинче тытăнса тăраççĕ. «Пулăшăр!» сăвва —вăрçăран амански килнĕ ыйткалакан салтакăн хуйăхлă юрри теме те çук. Мĕншĕн тесен. унта юрă принципне пăхăнман элементсем туллиех.

«1914—1918-мĕш çулсенчи вăрçă çинчен хывнă сăвă-юрăсем» ятлă пая вуласа тухсан, кĕнеке авторне питех те хĕрхенес килет. Хветĕр Уяр çак татăк-кĕсĕксемсĕр пуçне урăх материалсем тупма пултарайман-и вара? Паллах, тупма пулнă. Халăх юррисемпе такмакĕсем, чăн-чăн халăх чĕлхинчен çырса илнĕскерсем, наукăпа тĕпчев институчĕн алçыру фондĕнче купи-купипех выртаççĕ. Йывăртарах пулнă пулĕ çав Хветĕр Уяр юлташа çав томсене уçкаласа хупмашкăн. Мĕн каласси пур: халăх творчествин чăн-чăн ахах-мерченĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа ларичччен кĕнеке палати архивĕнче выртакан татăк-кĕсĕксене туртса кăларма темиçе хут ансатрах çав ĕнтĕ...

С. В. Эльгер кĕнеке умсăмахĕнче тĕрĕс асăрхаттарать: «Пулăшăр» сăвăпа «1944—18 çулсенчи вăрçă çинчен хывнă юрăсене», паллах, пĕр-пĕр сăвăçă çырнă пулĕ тен»... тет вăл. Анчах та ку сăвăсене кам çырни паллă мар пирки кăна фольклор шутне кĕртсе пичетлени пачах та тĕрĕс мар. Чăнах та, тепĕр чухне «ятсăр поэт» сăввисемех халăх юррисем пулса юлаççĕ (сăмахран. Ф. П. Павлов, Н. И. Шелепи, Иван Ивник тата ыттисен юррисем).

Ун пек чухне яланах вăл юрăсене ăçта, хăçан, камран тата кам çырса илнисене тĕплĕн кăтартса памалла. Çакна эпир кĕнекере курмастпăр.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Хветĕр Уяр кĕнекене тăрăшса туман, материалсене наука кăтартнă пек тĕпчесе ăнлантарса паман.

Халăх творчествине тĕрĕс мар кăтартса пани сиенлĕ япала. Чăвашсен государство издательстви малашне кун пек кĕнекесем кăларнă чухне фольклора чăнласа пĕлекен авторсемпе редакторсен вăйĕпе усă курмалла.

**И. ТУКТАШ, П. ГРИГОРЬЕВ.**

## Лайăх ĕçлекен письмоносец

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Мария Лисина Аслă Çĕрпÿ ялĕнчи сыхăну уйрăмĕнче письмоносец пулса ĕçлеме тытăннăранпа пĕр çулталăк иртрĕ ĕнтĕ. Тăлăх хĕрача Мария, çул тĕлĕшпе питех те çамрăк пулин те, ĕçе тĕплĕн туса пырать. Хăй ĕçлеме пуçланăранпа вăл пĕр çыру та, пĕр хаçат-журнал та çухатман. Вĕсене пур чухне те колхозниксем патне вăхăтра çитерет. Колхозниксем ăна уншăн яланах тав тăваççĕ, малашне те çавăн пекех ĕçлеме ыр сунаççĕ. Халăх хисеплени çамрăк хĕрачана тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Çавăнпа вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать.

Письмоносецсем лайăх ĕçлени сыхăну уйрăмĕн начальникĕ О. Огурцова юлташ тăрăшса ĕçленинчен те чылай килет. Вăл çамрăк работниксене тĕрĕс те тĕплĕн ĕçлеме вĕрентет, лайăх воспитани парса пырать.

**КАШКĂР МИКУЛИ.**

## *Выигрышсем 3 миллиард тенкĕлĕх тÿленĕ*

Совет Союзĕнчи ĕççыннисен государство заемĕсенчен илекен тупăшĕсем çултан çулах ÿссе пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа — 1941 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен — облигаци усракан çынсем 3 миллиард тенке яхăн тупăш илнĕ. (ТАСС).

# Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Арнгем районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта союзниксем, тĕртĕм каçпа усă курса, юхан шывăн çурçĕр хĕррине çĕнĕ вăйсем каçарнă. Неймеген хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Рейхсвальд вăрманĕ сывăхĕнче Германи территорине кĕрсе кайнă. Буа-ле-Дюк каналĕ çинче союзниксен çарĕсем тăшмана тапăнма тунă укрепление Дерне районне çитиччченех аслăлатнă. Кунтан хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем тăшмана Эско каналĕ патĕнчен Антверпен хулипе Тернгаут хули хушшинчи канал патне хăваласа янă.

Ретген хули районĕнче, Аахен хулинчен кăнтăртарахра, союзниксен çарĕсем тăшманăн çирĕплетнĕ пунктне пĕтерсе тăкнă, пысăках мар çĕр туртса илнĕ. Мец хули секторĕнче тăшман халĕ те Мозель шывĕн хĕвеланăç хĕрринче тата Мец хулинчен кăнтăртарахра çирĕп позици йышăнса тăрать. Ку секторта тăшман союзниксен çарĕсене хирĕç хытă тăрать.

Нанси хулинчен 8 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Лейр хулине ирĕке кăларнă.

Союзниксен авиацийĕ союзниксен Голландири тата Хĕвелтухăç Францири çарĕсене çапăçма пулăшса тăнă тата тăшманăн Кале районĕнчи çирĕплетнĕ позицийĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Итали фрончĕн вăтаçĕрти участокĕнче 5-мĕш арми çарĕсем çаплах малалла куçса пынă. Фронтăн Адриатика участокĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çар карапĕсем Генуя заливĕнче, çавăн пекех тата Адриатика тинĕсĕпе Эгей тинĕсĕнче кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Грецири, Югославири тата Çурçĕр Италири çапăçу районĕнчи объекчĕсене тапăннă.

## *Финляндипе перемири туни çинчен Америкăри хаçатсем мĕн çыраççĕ*

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндипе перемири туни çинчен «Вашингтон пост» тата Филадельфире тухакан «Инкуайрер» хаçатсем çапла çыраççĕ: Финлянди Германипе союзлă пулса тăнă пулин те, вăл хальхи вăхăтра хăйĕн никама пăхăнманлăхне çухатмарĕ, теççĕ. «Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Германи çĕнтерес пулсан, Финляндин пурнăçĕ хальхинчен начартарах пулнă пулĕччĕ. «Финсем перемири условийĕсене тĕплĕн пăхса тухсан, вĕсем çав условисем йывăр маррине курĕç. Тепĕр енчен каласан, çав условисене пурнăçа кĕртмелли майсем çинчен калакан ыйту çав условисенчен хăйсенчен кирлĕрех ыйту пулса тăрать пулмалла», тет хаçат.

Финсем Петсамо районне нимĕçсен аллине панă пирки американецсем чылай сиен курнине палăртса, хаçат çапла çырать: Финляндие Петсамо районне çухатнăшăн американецсенчен питĕ сахаллăшĕ çеç хурлĕç. «Финлянди халь политика енчен пĕрлĕхлĕ çĕршыв пулса юлать. Вăл ĕлĕкхи пекех пысăк та пуян çĕршыв пулса юлать; репараци суммине малтанхи суммăран икĕ хут чакарнă. Германи пĕтĕм Европăна тытса илсен мĕн пулса тăма пултарни çинчен шухăшласа пăхсан, çав перемири условийĕсен пĕлтерĕшне лайăх ăнланса илме пулать. Финлянди ун чухне географири ят çеç пулса юлнă пулĕччĕ, халь Мускав панă правăсемсĕр тăрса юлнă пулĕччĕ».

«Инкуайрер» хаçат çапла çырать: Финлянди перемири условийĕсем çемçерех пуласси çине ниепле те кĕтме пултарайман. Вăрçăра аяла пулнă çĕршыв пулса тăрса, Финляндин çав условисемпе ĕнтĕ пĕтĕмпех килĕшмелле пулать. Финлянди вăрçă Германи майлă пулнă чухне вăл, форма енчен пăхсан, Пĕрлешÿллĕ Штатсене хирĕç вăрçман пулин те, тĕрĕссипе вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕн тăшманĕсене пулăшса тăнă, мĕншĕн тесен вăл совет çарĕсене хăйĕн фронтĕнче тытса тăнă, çавăн пирки вара вăрçа малалла тăсма пулăшнă. Финлянди çĕр нумай çухатмарĕ, тесе çырать хаçат. Перемири условийĕсен территори çинчен калакан статьисем çакна çеç пĕлтереççĕ: «пурнăçа кирлĕ пек шухăшлакан вырăссем хăйсене хÿтĕлеççĕ, вĕсем финсем хăратма пултаракан Ленинграда хÿтĕлеççĕ, Балтика тинĕсне каймалли çула тасатаççĕ, чи инçетри çурçĕрте хăйсен флангне çирĕплетеççĕ, Финлянди кунçулĕ нумай начаратарах пулма пултарнă, вăл хăйĕн никама пăхăнманлăхне те çухатма пултарнă», тет хаçат.

Гитлерла блок питĕ хăвăрт арканса пынине палăртса, вăл юлашкинчен çапла çырат: Финлянди, Румынипе Болгари пекех, хăй вăхăтĕнче тĕрĕс мар çула суйласа илчĕ, çавăншăн ăна наказани памалла, тет.

## СУЙЛАВ УМĔН РУЗВЕЛЬТ ПĔРРЕМĔШ ХУТ ТУХСА КАЛАНĂ СĂМАХ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт шоферсен профсоюзĕн пухăвĕ валли радиопа сăмах тухса каланă (çав профсоюз Америкăри ĕç федерацине кĕрет). Суйлав умĕн пĕрремĕш хут тухса каланă çав сăмахра Рузвельт çапла каланă:

«Тăвата çул иртнĕ хыççăн, эпир каллех пĕрле пултăмăр. Çак çулсем мĕнле çулсем кăна пулмарĕç-ши! Эпĕ халь 4 çул аслăрах пулса тăтăм, çакă хăшпĕр çынсене тарăхтарать пулмалла. 1933 çулта хамăра хăварнă пăтранчăка йĕркене кĕртме тытăннăранпа, чăнах та ĕнтĕ, темиçе миллион çын 11 çул ытла аслăрах пулса тăчĕç», тенĕ Рузвельт. Кам мĕн чухлĕ сасă илес ыйту сиксе тухсан, хăшпĕр çынсем «хăйсем рабочисене юратнине, вĕсене хăйсен ĕлĕкхи тусĕсенчен сыхласшăн пулнине сасартăк кăтартасшăн». Республиканецсен партийĕн нумай лидерĕсем, конгресс членĕсем тата кандидачĕсем тăвата çул хушшинче рабочисен пурнăçне лайăхлатмалли кашни закона хирĕç вăйлă кĕрешрĕç, çавăн пирки укса нумай пĕтерчĕç.

Республиканецсен партийĕ ячĕпе калакан çынсем халь, Рузвельт каланă тăрăх, «Америка халăхне 1929 çулхи кризиспа депрессишĕн демократсен партийĕ айăплă тесе ĕнентерме» тăрăшаççĕ. Çапла хăтланнине Рузвельт «уççăн курăнса тăракан чăн-чăн ултав» тесе ят панă.

«Сире юлашки хут курнă хыççăн çак 4 çул хушшинче пулса иртнĕ мĕнпур событисем çинчен сире тепĕр хут каласа пама та кирлĕ мар,—тенĕ Рузвельт.— Конгресри тата унăн тулашĕнчи хăшпĕр çынсем эпир 1939 çулччен тата ун хыççăн хамăр çĕршыва хÿтĕлеме тăрăшнине хирĕç туха-туха каларĕç, çапла хатĕрленни вăрçа хатĕрленни пулать, терĕç; вĕсем союзниксене пулăшассине хирĕç каларĕç, çапла пулăшни провокациллĕ тата хăрушă ĕç пулса тăрать, терĕç. Çав сăмахсене эпир астăватпăр. Çав çынсем халь пире хăйсен сăмахĕсене мантарасшăн. Анчах та вĕсем 1940-мĕшпе 1941-мĕш çулсенче çав сăмахсене хытах каларĕç. Телее пула, вĕсем сахаллăн пулчĕç, Америкăна чараймарĕç, çакă вăл пирĕншĕн те, пĕтĕм тĕнчешĕн те лайăх пулчĕ. Европăпа Азире тăвăлсем асар-писер çĕмĕрсе çÿренĕ вăхăтра хăшпĕр политика деятелĕсем пуçĕсене хăйăр ăшне чикрĕç те хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли закон «Пĕрлешÿллĕ Штатсенче малашне ирĕклĕ правительство пулассине пĕтерсе лартĕ» терĕç. «Германипе Итали тата Япони пире хирĕç вăрçма пултарасси çинчен вĕсене сехре хăпса тухни çеç шухăшлаттарнă» терĕç пирĕн çинчен. Çав çынсем ĕнтĕ халь Америка халăхне хамăрăн тулашри политикăпа çар политикине хăйсен аллине пама ыйтаççĕ».

Рузвельт малалла Америкăри рабочисем Пĕрлешÿллĕ Штатсен вăрçă ĕçĕсене ырланине палăртса панă тата республиканецсен партийĕн руководителĕсен суйлав умĕнхи агитацири тĕп шухăшĕсем çине ответ панă.

«Пирĕн умра, — тенĕ Рузвельт, — пысăк задачăсем тăраççĕ, вĕсене пирĕн халиччĕнхи пекех тимлĕн, ăстан, пĕлсе тата ĕçе парăнса пурнăçласа пымалла, çапла тунине пула эпир халиччен çĕнтерÿ çулĕпе пытăмăр. Çак задача вăл — мĕнпур вăрçăсенчен те хăрушăрах вăрçа часрах та çын сахалтарах пĕтерсе вĕçлесси пулать, ăна тăшмана çĕнтернипе вĕçлесси пулать. Çак задача вăл — пĕрре тунă мире тепĕр хут пăсасран сыхлама пултаракан пĕтĕм тĕнчери организаци туса хурасси пулать. Юлашкинчен, пирĕн умра, хамăр тăван çĕршывра тăракан задача вăл — хамăр экономикăна вăрçă йĕркинчен мирлĕ йĕркене куçарасси пулать. Мирлĕ строительствăн çавăн пек задачисем пĕр вăхăтра пирĕн умра тăнăччĕ. Республиканецсен партийĕ çав задачăсене пурнăçа кĕртеймерĕ. Ку хутĕнче апла пулмалла мар. Эпир апла тăвас çук».

Экономикăна мирлĕ йĕркене куçармалли мероприятисем çинчен каласан, Рузвельт юлашкинчен çапла каланă:

«Çак вăрçăра Америка халăхĕпе унăн союзникĕсем çĕнтерни фашизма, реакцие, деспотизма çĕнтернинчен пысăкрах çĕнтерÿ пулать. Америка халăхĕпе унăн союзникĕсем çак вăрçăра çĕнтерни — демократи çĕнтерни пулать», тенĕ.

## СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ИТАЛИЕ ÇИТНĔ

РИМ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 22-мĕшĕнче Рима совет профсоюзĕсен делегацийĕ çитнĕ. Делегацире çак юлташсем Тарасов (делегаци пуçлăхĕ), Аксенов, Шуплецов тата Шевлагин (делегаци секретарĕ). Совет делегачĕсем Англипе Америка профсоюзĕсен делегачĕсемпе çыхăннă. Хаçатсем çапла çыраççĕ: совет делегачĕсем Италири пĕтĕм профсоюзсен ĕç конфедерацийĕпе тата уйрăм профсоюзсен организацийĕсемпе çыхăну тытма пуçлаççĕ. Совет делегацийĕн доклачĕсем, Англипе Америка делегачĕсен доклачĕсем пекех, Италири профсоюзсен юхăмне тĕнчери профсоюзсем пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе малашне çул кăтартса тăмалла.

## КĔСКЕН

* Люксембург чикки çывăхĕнче самолет-снарядсене пухакан чи пысăк завода тытса илнĕ. Çав завод французсен кивĕ рудникĕнче пулнă, вăл кунне 700 самолет-снаряд туса кăларма пултарнă. Ирĕксĕр хăваласа пухнă темиçе пин рабочи çав завода часрах туса пĕтерес тесе ĕçленĕ. Заводра темиçе пин тонна оборудовани тата туса пĕтермен самолет-снарядсем нумай тытса илнĕ.

* Данин ирĕклĕх совечĕ, гестаповецсем 23 датчана персе вĕлернине тата Данин тытса хупнă 190 патриотне Германие ăсатнине хирĕç протестлесе, 48 сехетлĕх пĕтĕмĕшле стачка тăвасси çинчен пĕлтернĕ.

* Пĕрлешÿллĕ Штатсен Атлантика океанĕ енчи çыранĕпе иртсе кайнă тăвăл питĕ пысăк района çавăрса илнĕ. Çилĕн хăвăртлăхĕ Коннектикут штачĕн çыранĕнче сехетре 108 мильăна çитнĕ. Пысăк хуласенче транспорта çÿреме чарса лартнă, сыхăну системи пăсăлнă, нумай çын вилнĕ е аманнă. (ТАСС).

# Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ:

Македонире Югослави чаçĕсем Реосан хулипе Джавато хулине ирĕке кăларнă, нимĕçсене кăнтăралла ывăтса янă.

Сербире, Лесковац—Власотинце — Ниш секторĕнче, хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта нимĕç çарĕсене пулăшма çĕнĕ вăйсем пырса çитнĕ. Ниш хулипе Пирот хули хушшинчи чугун çула Югослави чаçĕсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех туртса илнĕ. Шумадире Югослави чаçĕсем Крагуевац хулипе Аранджеловац хули хушшинчи Страгари ятлă паха узелпа тĕреклетнĕ пункта туртса илнĕ. Рудникран кăнтăртарахра Югослави çарĕсем Горни Милановац хулипе Крагуевац хули хушшинчи Врачешевница ятлă тĕреклетнĕ пункта туртса илнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире кĕске вăхăт хушши пынă çапăçу хыççăн Какан рудникне туртса илнĕ.

Ликăра, Госпич секторĕнче, Югослави чаçĕсем тăшманран Градина, Широка Кула, Чардак тата Лисац ятлă тĕреклетнĕ пунктсене туртса илнĕ. Ку секторта хаяр çапăçусем пыраççĕ.

«Слободна Югослави» радиостанци ятарласа панă пĕлтерÿре çапла каланă: Лазаревац хулине ирĕке кăларнă хыççăн çапăçусем ĕнтĕ Югослави столицине Белград хулине пырса кĕмелли çулсем çинче пулса пыраççĕ. Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн çак районра наступлени туса пыракан отрячĕсене хирĕç тăнă нимĕçсен, четниксен тата недичевецсен чаçĕсене аркатса тăкнă, вĕсем нимĕн йĕрки-паллисĕр каялла чакаççĕ.

Верховнăй штаб илнĕ хыпарсем тăрăх, сентябрĕн 15-мĕшĕччен Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ енне ирĕксĕр мобилизациленĕ 55.000 домобранец, четник тата недичевец куçнă.

## Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 25-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.200 самолет ытла, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Германие тапăннă. Американецсен йывăр бомбардировщикĕсем темиçе пысăк сортировка станцине, çавăн пекех тата хĕвеланăç Германири ытти вăрçă объекчĕсемпе промышленность объекчĕсене атакăланă.

Сентябрĕн 25-мĕшĕнче каçхине акăлчансен авиацийĕ Голландири Ден-Хелдер портне тапăннă. Кунта вăл вăхăтра тăшманăн 20 суднине яхăн тăнă. Нимĕçсем ку порта хăйсен Англин 2-мĕш армийĕ Голландире çавăрса илнĕ çарĕсене куçараççĕ пулмалла. Акăлчан самолечĕсем тăшман суднисемпе батарейисем çине торпедăсем пăрахнă, çавăн пекех тата тăшман объекчĕсене пенĕ.

Акăлчан самолечĕсем тата çавăн пекех тăшманăн батарейисемпе радиостанцийĕсене атакăланă.

Сентябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Маннгейм хулине тапăннă.

## Поляк социалисчĕсен партийĕн Люблинри съезчĕ

ЛЮБЛИН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Люблин хулинче поляк социалисчĕсен партийĕн (ППС-ăн) съезчĕ пулса иртнĕ. Вăл Польшăри демократиллĕ вăйсем пĕтĕçнине тата вĕсем Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ тавра пĕрлешнине кăтартса панă.

Польшăри политикăллă партисемпе обществăллă организацисен представителĕсем каланă сăмахсенче, çавăн пекех тата делегатсен сăмахĕсенче те çав вăйсем пĕтĕçни питĕ уççăн палăрнă. Делегатсем хăйсем Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕпе пĕр шухăшлă пулнине палăртнă, Польшăн эмиграцири правительствине хытă сивленĕ.

Съездра Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн председателĕ Осубка-Моравский политикăллă доклад тунă. Вăл Польшăн юлашки вăхăтри правительствисен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă. Унтан вăл Крайова Рада Народовăн тата Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн ĕçĕсем çинчен каланă. Польша халăхĕн çак пĕртен пĕр законлă пулса тăракан верховнăй органĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешÿ организациленĕ, вĕсем çĕнĕ Польша тăваççĕ, тенĕ Осубка-Моравский.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем çинчен Осубка-Моравский çапла каланă: Польшăн Совет Союзĕпе тата ытти славян халăхĕсемпе пуринпе те ĕмĕр туслăн пурăнмалла, тенĕ.

Съезд резолюци йышăннă. Çав резолюцире Крайова Рада Народова, Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ тата вырăнсенчи радăсем государство тытăмĕн поляк халăхне пуринчен ытларах килĕшекен демократиллĕ форми пулса тăраççĕ, тенĕ.

Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн манифесчĕ поляк халăхĕн требованийĕсемпе пуринпе те килĕшсе тăрать, тенĕ резолюцире. Съезд поляк социалисчĕсен партийĕн Крайова Рада Народовари тата Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчи представителĕсен ĕçĕсене пĕтĕмпех ырланă.

Резолюцире малалла çапла каланă: Польша халăхĕн тĕп тăшманĕ — гитлерла Германи пулса тăрать. Польша нумай вăхăт хушши никамран хăрамасăр пурăнасси вăл Совет Союзĕпе союзлă пурăнассинчен тата Хĕвеланăç Европăри демократиллĕ çĕршывсемпе туслăн çыхăнса тăрассинчен килет, тенĕ. Поляк халăхне Польшăна ирĕке кăларма пулăшнăшăн съезд Хĕрлĕ Çара питĕ хытă тав тунă. Съезд поляк халăхне Польша çарне мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма тата йышлăн çав çар ретне тăма чĕннĕ.

Резолюцире Рачкевич-Сосновский шайкин преступникла ĕçĕсене сивленĕ.

Конференцире партин ертсе пыракан органĕсене суйласа хунă.

Партин «Баррикада вольности» ятлă органне кăларса тăма йышăннă.

Съезд Сталин маршала, Рузвельта, Черчилле, Броз-Титона, Бенеша тата де Голле саламлă телеграммăсем янă.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти энергетика техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: курьерсем, техничкăсем, подсобнăй хуçалăх заведующийĕ, подсобнăй хуçалăх сторожĕ, нимĕç чĕлхине вĕрентекен преподаватель, столяр, кантăк лартакан, кăмака тăвакансем, слесарь, платник. Ĕçукçи—каласса таталнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7.

3—1

# РОМАНЫЧ

## (Собкорр блок-нотĕнчен)

Эпир Романычпа вăрман ăшĕнче çухалнă поселокран район центрне пĕрле пытăмăр. Вăл — Ивçекассисем, утмăл патнелле пынă çын. Малтан вăл манпала калаçасшăнах пулмарĕ, мĕнле мар ыйтусем çине те тытăнарах ответлерĕ, эпĕ çавăн пирки вăл ытти çынсенчен таталнă çын пулĕ тесе шухăшларăм. Анчах пырсан-пырсан, эпир лайăхах калаçса кайрăмăр, вара Романыч пĕтĕмпех малтан эпĕ ун çинчен шухăшланă пек марри курăнчĕ.

— Прокурор патне каятăп-ха, — терĕ вăл, пирĕн сăмах урапи вырăнтан хускалсан.—Карчăка вăрăпа тытрăм, значăт, халь ĕнтĕ допроса чĕнеççĕ пулать.

Вăл мĕнле, кам карчăкне вăрăпа тытнине каламан пирки, эпĕ ун çинчен те каламă ыйтрăм.

—Ара, хам собственнăй карчăках, значăт, арăмах, — терĕ вăл кулса ярса.

— Мĕнле пулчĕ-ха ку? — ыйтрăм эпĕ чĕррĕн интересленсе.

— Ара çаплах, — терĕ вăл, чĕлĕмне кăларса. Вара, ăна чĕртсе ярсан, хăйĕн «мыскарине» каласа пачĕ. Каланă чухне ун пичĕ çинче яланах ытла паллах мар кулă выляса тăчĕ.

— Кăнтăрла вăхăтĕнче акаран таврăнтăм, значăт, вара пĕр япала илме кĕлете кĕтĕм. Кĕлет кĕтессинче, пăхатăп, тырă выртать, ыраш, пĕр пăта яхăн, е пăртак катăкрах. «Аванса авăртнă, çĕнĕ аванс илмен-ха, мĕнле тырă ку?»—шухăшлатăп... Ну, сисетĕп, кăна карчăк тунă. Кинĕм те, хĕрĕм те тата хамăн ывăлăн вуникĕ çулхи ачи те кăна тăвас çук, колхозăнне илес çук, а карчăк илме пултарать, тетĕп. Вĕрентме кирлĕ, ку намăса чăтасси пулас çук. Эпĕ — утмăлта, çав шутран вăтăр çул мана Романыч тесе чĕнеççĕ, юлашкинчен чакак ятне илес çук, тетĕп. Пăхатăп ыраш çине те, малалла шухăшлатăп: пĕр хут мар, кăна вăл темиçе хут кайса илсе килнĕ, тетĕп. Çак тĕлте аса илех кайрăм: карчăк ман итеме, авăн çапма, сăкманпа çÿрет. «Мана, темĕскер, ирпе каç сивĕ-ха, те сивĕ чир ересшĕн», текелет. Мĕнле сивĕ чир ернине тинех ăнлантăм. Ну, тетĕп хама хам, килте эпĕ сана тилхепе эмелĕ парăп, а итем çинче айăпне тунă çĕртех тытăп, вара эсĕ пĕтĕм çемьене намăс тума чарăнăн, тетĕп. Хурала та, конешнă, вăрçрăм: тĕплех мар пирĕн хурал. Каланă эпĕ: ухтарас пулать..: Çук вĕт: «Илмĕç, сознательнăç пулмалла», теççĕ. Пулмалла та-ха, пурин те мар-çке-ха вăл. «Ăçта пурăнать-ха вăл, хайхи сознательнăç: вăрманта-и, уйра-и, çĕр шăтăкĕнче-и, йывăç шăтăкĕнче-и», тет ман карчăках.

— Миçере сан арăму? — ыйтрăм эпĕ Романычран.

— Манран пĕр пилĕк çул аслăрах. Анчах ĕç ун çулĕнче мар пĕрре те: теприсем унтан нумай аслăраххисем те çапла калас çук, теприсем—унтан кĕçĕннисем те ун хăраххисем. Ну, малалла калăпăр-ха. Акаран килсен эпĕ пăртак выртса канасшăнччĕ, кайран правленине кайса килесшĕнччĕ: тепĕр кунхи акана тата тепĕр мăшăр вăкăр кÿлтерес тесе канаш памалласчĕ председателе. Ну, ку ĕçе хăварма лекрĕ. Кĕлете çăрапа питĕртĕм те итеме кайрăм. Икĕ урам витĕр тухса, армансем патне çитсе ÿкнине сисмерĕм те. Армансем патĕнчен итеме пĕр ик-виç ана пÿ çеç. Çитрĕм унта. Çапаççĕ авăн пĕр çирĕм, çирĕм пилĕк хĕрарăм...

— Тăпачăсемпе-и?

— Тăпачăсемпе: молотилка ĕçлемерĕ пирĕн кăçал, ваннă пирки. Молотилка ĕçленĕ чухне серьезнăй çынсем итемре ытларах пулаççĕ, вĕсем хушшинче школьниксем, а кусем — нимĕнле чее вăрра та вăрлама парас çук. Учитель пирĕн строгий, пултараканскер. Ну, чĕнетĕп карчăка хам патăма. «Ыраша эсĕ тултартăн-и?»—тесе ыйтатăп. «Мĕнле ыраш?— Ни унсăр, ни кунсăр.—Мĕн калаçатăн эсĕ? Лаша пек ĕçлетĕп, мĕнле те пулсан лайăхрах тăвас тесе тăрăшатăп, спаçипă вырăнне вăн мĕн илтетĕп. Ултă ача ÿстертĕм, асаплантăм-асаплантăм», тет. Ну, кун хыççăн манăн нимĕн иккĕленесси те юлмарĕ, мĕншĕн тесен, лайăх пĕлетĕп: калаçса кайрĕ иккен карчăкăм çакăн пек хурлăхлă сăмахсемпе—айăплă вара! «Сăкман ăçта?»—тесе ыйтатăп. «Мĕнле сăкман?» «Камăн пултăр, санăн!». «Мĕнле манăн?». Манран кулать пек, анчах куратăп: çухалса кайрĕ, хăраса ÿкрĕ, мĕншĕн тесен пĕлет ман характера — шутит тумастăп... Ну, сăкман — йĕп мар, тупрăм ăна сĕкĕртсем хушшинче, а кăсйисене ырашпа тултарма ĕлкĕрнĕ те. Шырарăм тата — тата темиçе сăкман тупрăм.

— Миçе мĕн пурĕ?

— Сахалах мар: пĕр хĕрарăмăн пулсан—пĕр ĕмĕр пурăнма тата пĕр-ик хĕрне качча панă чух парне пама çитет.

— Вара мĕнле пулчĕ?

— Мĕнле пултăр ĕнтĕ, çаплах: пĕрле пухрăм сăкмансене, сыхрăм кантăрапа, сурăм çине хутăм та каларăм: «Груз çисем ман хыççăн пыччăр»,—терĕм. Ытти хĕрарăмсем, вăрламаннисем, ахăлтатаççĕ, кусем пуçĕсене усрĕç те ман хыççăн утрĕç, манăн сивĕ чир ернĕскер те вĕсемпех ĕнтĕ. Пĕр ана пÿ кайсан, малтан пĕри, кайран тепри: «Романыч, мĕн-ха эсĕ пире çав пĕчĕк ĕçшĕнех намăс кăтартатăн, каламалăх та çук вĕт тырри. Пар пире сăкмансене, тыррине тăкар та ĕçĕ те пĕттĕр!»—теççĕ. «Çапла ара, тетĕп, çитĕпĕр те акă колхоз амбарне тăкăпăр, анчах малтан висе çине силлĕпĕр, мĕншĕн тесен, тарăсăр пуçне тырри çеç мĕн чухлĕ туртнине пĕлме кирлĕ. А тарăпа пĕрле мĕн чухлĕ туртнине халех чухлама пултаратăр», тетĕп. Чарăнтăм та вара приказ патăм: «Ну, черетпе йăтăр! Эсир — пуп майрисем мар, эпĕ тарçă мар!»—терĕм. Ну, анчах та, хирĕçекенсем пулмарĕç, йăтрĕç, хамăн карчăка кăна ăнлантарса памасăр чăтма пултараймарăм: «Хĕрпе кин — ытти çынсемшĕн пример пулса тăраççĕ, ултавсăр та тĕрĕс ĕçлеççĕ, ывăлăн ачи кăçал тăвата класлă шкултан похвальнăй листпа вĕренсе тухрĕ, ывăл хăй, фронтра вăрă-хурах фашистсемпе çапăçса, пĕр медаль те тепĕр орден илнĕ, эпĕ, сан упăшку, нихçан та ун пек, кун пек кукăр çын пулман, пĕр эсĕ çеç пирĕн килйыш ятне пăсасшăн!»—терĕм.

Романыч хăйĕн пичĕ çинче выляса тăракан паллăмар кулла сирсе ячĕ те сăмахне çапла пĕтерчĕ:

— Ну, йăтса çитерчĕç, висрĕмĕр, акт сыртăмăр, ĕçе суда ятăмăр. Обыск пулчĕ, хăшпĕрисем патĕнче килĕсенче те тупрăмăр. Ну, сывă пул. Çитрĕмĕр, значăт...

Сывпуллашрăмăр та, вара эпир Романычпа уйăрăлтăмăр.

**Виктор РЗАЙ.**

Пĕппĕс районĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23

НТ 00713. Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.